3580
44-18

УХСАЙ ЯККĂВĔ

# ВАРÇĂ ХИРЕНЧЕ

*СĂВĂСЕМ*

☆

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1944

УХСАЙ ЯККĂВĔ

3580

# ВĂРÇĂ ХИРĔНЧЕ

САВĂСЕМ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1943

Редактор *С. Эльгер.*

НТ 290. Подп. к печ. 25/XI-43 г. 1,375 п. л. Тираж. 3000. Заказ 1249

г. Чебоксары, Тип. № 1. Управ. Полиграфпром. при СНК ЧАССР

## МУСКАВ

### I

Мускав тесен, ялан чĕремĕр
Хумханнă,—савăнна эпир.
Ăна савса, аса илмесĕр,
Иртмен пĕр кун, пĕр каç, пĕр ир;
Эпир чи лайăх юрă хунă,
Чи лайăх сăвă ун çинчен,
Çĕршывăн пур кĕтессинчен
Килсе эпир ăна тав тунă,
Хисеплĕ Хĕрлĕ площадь урлă
Ялан, кашни иртмессерен,
Унта тĕнче илемĕ курнă,
Унта хĕп-хĕрлĕ çăлтăрсен
Чыс пек таса илемĕнче
Пуç тайнă Ленин умĕнче.

### II

Чи лайăх сăмахсем тупасшăн,
Кĕртесшĕн эпĕ сăввăма,
Сана, Мускав, чунран мухтасшăн
Пухас килет хăватăма;
Мĕншĕн тесен, çут тĕнчере
Мускав хули пулман пулсассăн,
Чуралăхра, хыткан çĕре
Тăрмаласа, эпир хавассăр
Çўреттĕмĕр; пире çу кунĕ
Кăтартмĕччĕ хĕвел тĕсне,

Тек кавлĕччĕ патша саккунĕ
Чăваш чĕлхи кĕнекине;
Чăваш вăрманĕ, хирĕ урлă,
Хуçа пек çӳрĕччĕ хĕн-хурлăх.

III

Мускавăмăр, çĕршыв илемĕ,
Вăрмансенчен, уй-хирсенчен
Эпир килсен, тăван аннемĕр
Эс пултăн, институтсенче
Пире пăхса аталантартăн,
Пурне те патăн кирлине;
Вĕренĕр!—терĕн те тăратрăн
Пире профессорсен умне.
Телей шыранисен телейĕ
Килсе йăпатрĕ чĕрене,
Уçса эс хутăн Менделеев,
Некрасов кĕнекисене,
Пире савса алăсене
Тыттартăн Пушкин сăввине.

IV

Мускав! Çăпатапа килсен,
Эс тăхăнтартăн сăран атă,
Шăннисене—ăш пӳлĕмсем,
Чирлисене эс сывлăх патăн,
Мĕскĕнсене хисеплĕ турăн,
Сухаçăсен ачисене
Дворецсене кĕртсе культурăн
Хĕвел çутти пек тĕшшине
Тыттартăн; канăçлăх курмасăр
Кăлартăн аслă çул çине;
Çуралчĕç вĕсенчен профессор,
Артист, художник, инженер.

Мускав, Мускав! тăван хуламăр!
Чĕри сиксе хумханмĕ камăн!

V

Нихçан та асăмран каймассĕ
Яка, таса урамусем!
Çĕрле хĕвел пек ялтăрассĕ
Хĕрлĕ вутчуль çăлтăрусем
Ват Кремль хӳмисем çинче.
Сан кăкăрна килсе таптасшăн
Хăтланчĕ Гитлер, йĕрĕнчĕк.
Тутар-и, вырăс-и, чăваш-и,
Пурте пĕтĕм çĕршывĕпе
Çĕклентĕмĕр хастарлăн, вирлĕн,—
Мускав тавралăхĕ, уйхирĕ
Сăрланчĕ нимĕç юнĕпе.
Миçе дивизи, Гитлер мурĕн
Йăсанчĕ çăвасен тĕпне.
Тĕнче хитре Мускав вăйне
Курать те, курнă та, вăл курĕ
Пиншер çултан та малашне.

1941.

## ВИНТОВКА

Хисеплĕ тусăм, шанчăклă пăшалăм
  Ялтрать хĕвелĕн çуттинче.
Хитре те çутă затворне ман аллăм
  Тытать хăрушă кунсенче.

Манччен ăна тĕреклĕ тытаканĕ
  Хăравсăр паттăр гражданин
Финлянди чиккинче патвар утман-и?
  Вăл утнă, пулнă харсăр çын.

Винтовка унăн аллинче тĕл пенĕ,
Пĕрре те йăнăш шатлатман.
Винтовка паттăр хушнă пек кĕрленĕ;
Йăваннă юн хăсса тăшман.

Пĕрре кăна-и çивĕч штыкĕ унăн
Ялтранă? Пĕтнĕ çичĕ ют.
Тăшман цуçне тивлетсĕр, чыссăр хунă,
Тăшман тăраймĕ тепĕр хут.

В нтовка сивĕ кунсенче юнланнă,
Анчах нихçан та пăрланман,
Çиçсе çуталнă штык, затвор вылянă,
Шывран, юртан та тутăхман.

Винтовкăн паттăр çамрăк гражданинĕ
Финлянди вăрçă хирĕнче
Хастарланса Тăван Çĕршывшăн вилнĕ,
Кĕрешнĕ куçĕ сўниччен.

Герой ятне аса илетпĕр халĕ,
Вулатпăр çутă штык çинче.
Хасан панче чапланнă ун пăшалĕ,
Чапланнă Халхин-Гол панче.

Ăна тытса тупа тăватăп эпĕ:
Нихçан та тутăхмĕ пăшал,
Çухалмĕ ун мухтавĕпе хисепĕ,
Шалт перĕ те—ўкерĕ шалт.

Юратнă тусăм, шанчăклă пăшалăм,
Тивлетлĕ тусăм алăра,—
Тăшмансене кăвар сапса ăшалĕ,
Çунтарĕ, хирĕ вăрçăра.

Эс пур чухне, пăшалăм—савнă тусăм,
Çĕрле те, кăнтăрла та ир

Эп сыхлап ҫӗршыва, хумханӗ пусӑ,
Вӑрман каш-кашлӗ, шавлӗ хир.

Эп йӑвансан, сана, пӑшалӑм, тытӗ
Татах та тепӗр тус—герой.
Тӑшман ҫаралӗ, вилӗ урнӑ йытӑ,
Ҫӗршыв ешерӗ, шавлӗ уй.

1941.

## ГАСТЕЛЛО КАПИТАН

Хура тӑпра пулса аркантӑр
Ҫӳлти те ҫӗр ҫинчи тӑшман!
Ҫилрен те хӑвӑртрах, сасартӑк
Ҫӳле ҫӗкленчӗ капитан.

Юратнӑ тусӑмӑр Гастелло
Шап-шурӑ пӗлӗт хушшинче
Иртет, нихҫан сӳнми вӑйхаллӑн
Самолёта ертет инҫе.

Пӗрре кӑна-и вилӗм янӑ,
Кӑвар ҫутарнӑ ют ҫине,
Пӗрре кӑна-и таткаланӑ,
Вӑл ирнӗ нимӗҫ кӗтӳне!..

Ёнер ем-ешӗл тырӑ анлӑн
Хумханнӑ вырӑнта паян—
Таптаннӑ хир хура тусанлӑ;
Унта—танксем, унта—тӑшман.

Вӗҫет Гастелло, ик ҫуначӗ
Касать хуралнӑ сывлӑша.
Ак бомба хыҫҫӑн бомба ячӗ
Ҫӗрте тусан вӑр-вӑркӑшать.

Унта, кунта та вут капанĕ.
Уй-хир чĕтрет, мăкăрланать.
Çĕршер фашист, тĕнче çăпанĕ
Укет, çунса кукарланать.

Гастелло, харсăр ăмăрткайăк,
Çĕре пăхса çӳлтен иртет,
Моторĕ кĕрĕлтетнĕ майăн
Юрлать, ача пек хĕлĕртет.

Пĕр-икĕ бомба çеç пулсассăн,—
Эх, çук иккен! Люкра юлман.
Мотор шавне çĕнес пек саслăн:
—Тепре анас!—тет капитан.

Çĕре лекес пекех аяллăн
Вĕçсе пырса пулеметран
Колоннăна перет Гастелло,
Аслатилле тăкать кăвар.

Сасартăк самолёт кисренчĕ,
Сиксе чĕтрерĕ. Ырă мар...
Бензин бакне тăшман снарячĕ
Шăтарнă. Ялкăшать кăвар.

Çĕре сиксессĕн, çăмăл мар-и?
Парашютна çеç тыт кăна!
Анчах унта тăшманăн çарĕ,—
Лекетĕн намăс тыткăна.

Гастелло капитан ун пек-и,
Ярать-и гражданин чысне?
Кĕл пул, çапах тăшман инкекĕ
Ан ӳктĕр сан пуçу çине!

Çӳлте çунсан, кĕлӳ саланĕ...
Вилсен те—усă пултăр сан.

Татах та урăх çул тупан-и?
Тупатъ Гастелло капитан.

Сикмест вăл; шурă парашючĕ
Пулмарĕ уншăн ик çунат.
Ахаль вилмест. Бензинăн вучĕ
Вăйланчĕ; самолёт çунать.

Ёнсе ыратнă икĕ алă
Руле ямасть, пăхать ик куç.
Вĕçет ĕмĕр манми Гастелло,
Ун асăнче юратнă халăх,
Тăван çĕршыв, тăван Çулпуç.

Ик куçĕ курнă чух тĕллерĕ
Тăшман машинисем çине,
Куçне вут хупличчен йĕрлерĕ
Бензин цистернисем тĕлне.

Çул тытрĕ капитан Гастелло:
Тăван çĕршывăм, сывă пул!
Сывпул, юратнă аслă халăх!
Юратнă Сталин, сывă пул!

Кăварлă самолёт йăванчĕ
Бензин цистернисем çине,
Вăл, хăй вилсе, çĕр вилĕм ячĕ
Этем çиен тăшмансене.

1941

## ВĂРÇĂ ХИРĔНЧЕ

Вăрçă кăварĕ витĕр вăркăнатăп;
Мана шыранă пек шилет тăхлан,
Анчах та эсĕ пĕр сехет кăна та
Тухмастăн, савнă тусăм, асăмран.

Сана курма паян çул çук, тăванăм,
Ман çулăм вут та çулăм ăшĕнче,
Ăна снаряд та бомбă чавалана,
Юлташăмсен чĕр юнĕ ун çинче.

Вăрçă уй-хирĕнче ем-ешĕл курăк
Шăтсан, киле тин эпĕ таврăнăп,
Ирхи хĕвел хĕлхемĕ витĕр курăп
Çăра çаранлă хамăн таврана.

Самант хушши те тăхтамасăр вилĕм
Çӳрет, карса киревсĕр аллине.
Пĕлместĕп эп: тен маншăн та хам килĕм
Кĕтсе уçаймĕ сăрлă хапхине...

Анчах темле вилсен те,—юлăп эпĕ
Хĕрӳ чĕреллĕ халăх асĕнче,
Поэт юрри-сăвви, поэт хисепĕ
Çаплах та пĕтмĕç халăх хушшинче.

Сăпка юрринче те ман юлĕ ятăм,
Вăл йыхăрĕ çĕршывшăн çапăçма,
Мĕншĕн тесен çĕршывшĕн эпĕ патăм
Вĕри вăя, кăварлă юнăма.

1943

## ТĂРНАСЕМ

Ĕне хăйми пек шур тĕтре
Ирхи вăрман çине ӳксен,
Таса та уçă пĕлĕтре
Эсир йĕретĕр, тăрнасем!

Çунат сулса ярнатăр та
Пăхатăр ешĕл хир çине.

Сисетпĕр сирĕн сассăрта
Асап хыпарĕ пуррине.

Сипетлĕ кăнтăр ăшшинчен
Эсир кунта ăсаннă чух,
Куратăр—ваннă çĕр çинче
Юнланнă шыв, тĕпреннĕ чул.

Пĕлтĕр шăпчăк сасси хитре
Янрана вырăнта—садсем
Çунса çаралнă, пĕлĕтре
Юрри çук халĕ тăрисен.

Тăпран хăватлă кăкăрне
Алтса амантнă бомбăсем.
Ларма именнĕ ун çине
Эсир, мăнтарăн тăрнасем!

Эсир çуллен канса ачаш
Чӳхенне кӳлĕсем çинче
Хăях ӳсмест,—виле анчах
Хуралнă уйăх çуттинче.

Тăшман урса, чĕрсе, касса
Таптанă кăнтăртан килсе
Салам калатăр ахлатса,
Кĕмĕл чĕлхеллĕ тăрнасем!

Тăпра çине выртса эпир
Итлетпĕр сирĕн сассăра,
Куçа хупмасăр, каç та ир
Пыратпăр аслă вăрçăра.

Илемлĕ Атăл хĕрринче
Эсир лăпланăр, тăрнасем!
Тăп-тăрă шывăн хумĕнче
Вăйланĕç-ха çунатăрсем.

Хăватлă пырĕ çапăçу.
Çĕлен-калта пек тăшмана
Аркатăпăр,—вĕри куççуль
Шăвармĕ пирĕн тăпрана.

Ылханлă нимĕç шăршинчен
Тасалĕ сывлăш ĕмĕрех,
Тăшман алхаснă çĕрсенче
Тавралăх çиçĕ çеçкере.

Эсир ун чух кăнтăралла
Каймa хаваслăн çĕкленсен:
— Кайри мала! Кайри мала!—
Тесе калаçăр, тăрнасем.

Ун чух тĕреклĕ чĕппĕрсен
Мăнтăр, тулли пĕсехине
Фашист кураймĕ,—шăммисем
Пытанчĕç унăн çĕр айне.

Кĕрлет тĕнче. Шавлать тăхлав.
Ӳкеççĕ пирĕн юлташсем.
Эсир пире чĕнсе паян
Çӳлтен иртетĕр, тăрнасем!

Пин пуля шавĕ хушшинче
Сире илтетпĕр, тăрнасем!
Пире ĕненĕр: çут тĕнче
Тасалĕ,—пĕтĕç тăшмансем.

1942

## КУРСК ХИРĔНЧЕ.

Хĕн вăхăт пулчĕ çул çинче:
Йĕпе-сăпа, кăрлач сивви те...
Эп пытăм вăрçă хирĕнче
Вĕри тăхланлă çумăр витĕр.

Çап-çамрăк хамăн пурнăçа
Хĕрхентĕм-и? Юна юхтартăм.
Кăвар чĕлхеллĕн калаçса
Кĕрлерĕ тусăм, автоматăм.

Çак хушăрах, Курск хирĕнче
Хĕрӳллĕ сăвă эп çыратăп
Хам юнăм юхнă çĕр çинчен.
Ăна туссем валли усратăп
Тусанлă атă кунчинче.

1943

## САРКАЙĂК

Вĕл вĕçсе саркайăк
Ларчĕ умăма,
Тытăнчĕ вăл лайăх,
Хӳхĕм юрлама.

Тарават та тунсăх
Хăпаратчĕ ир.
Юрлаканччĕ, тусăм,
Иксĕмĕр эпир.

Урнă ӳсĕр нимĕç
Юрă çĕршывне
Çаратасшăн, ирсĕр,
Ячĕ хăй çарне.

Çунтарма кăвайтă
Турĕ садсене...
Çĕр хыпса çăтайтăр
Хăрăк шăммине!

Юрруна, саркайăк,
Кĕвĕле хитре!
Çамрăксем нумайăн
Тухнă уй-хире:

Пĕлĕт пек шăваççĕ
Хĕвеланăçне,
Юн тăкса сыхлаççĕ
Юрă çĕршывне.

Хăвăрт килмĕп эпĕ
Вăрçă хирĕнчен.
Арăм кĕтĕ,—сапĕ
Тулă ир çинче.

Туллине, саркайăк,
Çи те юрă хур:
Тĕнчере чи лайăх
Пирĕн туслăх пур.

Кĕтĕ арăм, утĕ
Уйăх çуттинче;
Пулĕ кулляни те
Йывăр кунсенче.

Çавăн чух, тăванăм,
Кĕвĕле чечен...
Итлĕ сана арăм
Кантăк умĕнче.

1942

## ÇУМĂР

Çĕре çурас пек артиллери
Кăвар сапса шавланă чух,
Сасартăк аслати.кĕрлерĕ,
Пип-пип снаряд пек аçачуль
Тўпе çинче сиксе çўрерĕ.

Аҫа ҫапса шартлатнӑ майӑн
Озон шӑршиллӗ хир ҫине
Окопӑмран пӑхса эп лайӑх
Асилтӗм Тютчев сӑввине:
„Люблю грозу в начале мая...“

Лӗп ӑшӑ ҫумӑра ырларӑм,
Хывса пӑрахрӑм каскӑма,
Ҫара пуҫ тӑтӑм та сӑнарӑм:
Епле пуҫларӗ ҫӑвӑнма
Аманнӑ ҫӗр, аннем мӑнтарӑн!

Чир кайтӑр! Вилнӗ нимӗҫ пӳрӗ,
Шӑрши ҫухалтӑр ҫӗр ҫинчен!
Ҫертӗр тӑшман вилли, ҫӗр чирӗ!
Ҫу, ҫумӑр, чашкӑр! Вӑрҫӑ хирӗ
Тасалтӑр, уҫӑлтӑр тӗнче!
1943

## Ҫ Ы Р У

Савнӑ тусӑм, кӑмӑллӑ юлташӑм,
Ан кӳрен тархасшӑн, ан ҫилен:
Кӑранташ алла тахҫан тытасшӑн
Ҫунтӑм эпӗ тӗксӗм каҫсерен.

Кӑвакарчӑн пек кӑвак яка пӑр
Мина айӗн ҫурӑлнӑ чухне
Асӑмран тухмарӑн, эсӗ капӑр
Тумланса ҫӗклентӗн куҫ умне.

Тӗттӗм каҫ тӑман чаршавӗ витӗр
Утнӑ чух, сан ӑшӑ куҫусем
Курӑнса ҫунсан, кӑрлач сивви те
Шӑнтаймарӗ, пӑрӑнчӗҫ ҫилсем.

Хушăран ракетăсен кĕперĕ
Ярăнса çухалчĕ пĕлĕтре.
Пулемет сасси пĕр май кĕрлерĕ,
Мина иртрĕ, шăхăрчĕ етре.

Утрăм эпĕ, пытăм тĕксĕм витĕр.
Тар тăварлă. Тумăм йĕп-йĕпе.
Куçусем умра татти-сыпписĕр
Йăлтăртатрĕç çул кăтартнă пек.

Пĕлĕте çурса сап-сарă уйăх
Тухасса эп кĕтрĕм, такăр çул
Уçĕ,—терĕм,—аслă Донăн уйĕ.
Çук, тухмарĕ уйăх, çутă çук.

Çакă çĕр санпаччĕ манăн туйăм,
Пытăн эсĕ манăн чĕрере,
Пултăн сарăран та сарă уйăх,
Пăхрăн чĕрĕрен те чĕрĕрех.

Сан патна çитейменп эп приказсăр,
Хушшăмăр—пин çухрăм шурă юр.
Шупашкар инçе, инçе тăван сăрт,
Умăмра окоп тя хĕрлĕ юн.

Тавăрăнăп, çĕнтерӳ кĕперĕ
Халăх юнĕпе каркалансан,
Хамăн ывăл сăпкине сиктерĕп
Сăвă çырнă хыççăн, ывăнсан.

Ларĕ пĕр енче Элкер юлташăм,
Вата сăвăç, хам пекех салтак;
Тепринче вылянĕç-ха ачашшăн
Куçусем сан... çырăрах кăвак.

Январь, 1943.
Дон хĕрринче.

## КĂВАК ÇЕÇКЕ

Юлташăм тухрĕ ирхине
Йĕпе окопăн хĕррине.

Сасартăк курчĕ вăл çеçке.
Кăвак çеçке илемлĕ-çке.

Ăна татса, вăл конвертне
Ăсатрĕ чун варли патне.

Çеçке йăпатĕ инçетре
Фиалкă куçлă пĕр хĕре.

Çеçки типсен те. пӳртĕнче
Çеçке пек туйăнĕ тĕнче.

1943

## ШАП-ШУРĂ ХУРĂН УМĔНЧЕ...

Шап-шурă хурăн умĕнче
Вĕсем тĕлпулчĕç ир çинче.
Хăварчĕ каччă сар хĕре,
Хăварчĕ аслă уй-хире.

Калле çу кунĕ çĕмĕртсем
Шап-шурă шупăр пĕркенсен,
Килетĕп! — терĕ, уйрăлчĕ.
Лаши ун сикрĕ, вăркăнчĕ.

Пăхса хĕр тăчĕ нумайччен,
Тусан лăпланчĕ çул çинче.
Кун хыççăн кун иртет, иртет...
Килет-и? — тет, сар хĕр кĕтет.

Каччи — сержант. Каччи — герой.
Тăхлан кĕрлет. Юнланнă уй.
Пырать вут витĕр вăл вĕçсе,
Перет, чикет вăл нимĕçе.

Герой вут витĕр инçетре
Аса илет хитре хĕре,
Атакăна каяс чухне
Ялан пăхать ун портретне.

Çĕршыв уй-хирĕ тăшманран
Хăюллăн, паттăр тасалсан,
Çĕнтерне халăх савăнĕ,
Ӳнчух тин каччă таврăнĕ.

Шап-шурă хурăн умĕнче
Хĕрĕ тĕлпулĕ ир çинче,
Ыталĕ каччă ирхине,
Ыталĕ савнă сар хĕрне.

1942

## КАРТИ-КАРТИ КИКАК ХУРКАЙĂК...

Карти-карти кикак-кикак хуркайăк
Кĕлленне Белгород çинче, çӳлте
Йĕре-йĕре çулне шыранă майăн,
Пăхатăп тĕтĕмленнĕ пĕлĕте.

Вăрçă уй-хирĕнчен салам сана
Яратăп, инçетри чăваш çĕршывĕ!
Донец чӳхерĕ манăн сурана,
Хăнасене чӳхетĕр Атăл шывĕ.

Хуркайăксем! окопăмран тухса,
Салтак, чăваш поэчĕ, эп — Ухсай
Автомата тытса тупа тăватăп:

Тăшман лаши ĕçеймĕ сан шывна,
Итлеймĕ куккукна; хăватлă Атăл,
Кураймĕ нимĕç куçĕ сан хумна!

1943

* * *

Карти-карти кикак-кикак хуркайăк,
Яка мĕн çулăр симĕс пĕлĕтре.
Тархасшăн пулăр, хӳхĕм Силпире,
Аннемшĕн юрласа иртсе çеç кайăр.

Кăвар хупланă Белгород çивчен
Эсир пăртакçă каласа хăварăр:
Силпи ачи çӳрет вут ăшĕнче, —
Тесе эсир, хуркайăксем, хыпарлăр!

Ачи аманнă, тейĕр, юхнă юнĕ,
Анчах та, тейĕр, сывă, яштака,
Çĕршывшăн, тейĕр, кăварта та çунĕ.

Тăшман çине тăхлан тăка-тăка
Сире калатăп эп, Силпи чăвашĕ,
Тăрса юлатăп пуç ухса ачашшăн.

1943

## ХУРКАЙĂКСЕМ!..

Урал ту-чакăлĕ пуçланнă вырăн,
Чăнкă çыран, кăштах кăлканлăскер.
Унта тăпра чăвашшăн чаплă, ырă:
Поэт масарĕ, пĕчĕк тĕмеске.

Чăваш ачи хăюллă пултăр! — тенĕ
Мухтавлă Иванов, тăван пичче,
Куççуль тăкса поэма кĕвĕленĕ
Телейсĕр, харсăр геройсем çинчен.

Хуркайăксем! Унтан иртес пулсассăн,
Тăшман çине чăваш пыни çинчен
Пĕлтерĕр, кĕрлесе янравлă саслăн.

Калать сире Ухсай, чăваш салтакĕ,
Сухарипе пĕрле хутаçĕнче —
„Нарспи" поэма та чăваш такмакĕ.

1943

## БЕЛОРУС ПАРТИЗАНĔ ТУПА ТУНИ

(А. Белевич сăвви)

Çапăçса мухтавлăн вилнĕ тусăн
Вилтăпри умне пыратăп та,
Хирсене шўтернĕ хамăр юншăн
Тавăрмаваскать вăй кăкăрта.

Хаклă тусăн тăприне пĕр ывăç
Чăмăртатăп кăкăрăм çумне.
Тусăм, сывăр! Тусăм, канлĕ сывăр!
Мур тăшман пусаймĕ сан çине.

Сан юну хĕретнĕ чĕр тăпранăн
Катăкне çыртса, тупа туса,
Ĕнентеретĕп: çакă вырăн санăн
Ĕмĕр-ĕмĕр пулĕ тап-таса.

Çĕршыва таптарĕ ирсĕр нимĕç,
Ĕмĕтсĕр карланкă, йĕрĕнчĕк.
Парăпăр ăна хăватлă хурçă çимĕç
Çамкинчен те çурăм хыçĕнчен.

—

Килчĕ нимĕç. Çӳлĕ тутă тулă
Ялкăшать, çунаççĕ суратсем.
Акă ӳкрĕ бомба... Канлĕ пулăр,
Çĕр хуплана пирĕн тăвансем!

Эх, тăван çĕршывăм, Белорусăм,
Куртăн эсĕ хурлăх, куртăн юн.
Куççулленчĕ пирĕн халăх куçĕ,
Тавăрма çĕкленчĕ çилли ун.

Нимĕç лашисем ĕçеççĕ халĕ
Ĕмĕрхи тăван çырма шывне.
Вăхăт çитĕ, белорус сухалĕ
Нимĕçрен тасатнă уй çĕрне.

Вăхăт çитĕ, ирсĕр нимĕç мурĕн
Хăрăк шăммисем выртнисене
Курĕ белорус, пăхса лач сурĕ
Вăл унăн хĕресĕсем çине.

Тусăн вилтăпри çинче тăратăп,
Хамăн ывăçра ун тăприне
Чăмăртатăп та тупа тăватăп,
Шăхăрса чĕнетĕп туссене.

Йышăнтăр тăван çĕршыв вăрманĕ
Хăлат куçлă паттăр çынсене.
Çынçиен фашист — çĕлен ăнланĕ
Сĕм хура вăрманăн йăлине.

Касăлать-и купăста кучанĕ?
Касăлать, çĕççе пырса лексен.
Касăпăр кучан пекех, пăчланĕ, —
Вилĕ нимĕç, пĕтĕ нимĕç, çынçиен.

(Белорус чĕлхинчен куçарнă).

## БЕЛОРУÇ

(А. Острейко сăвви)

I

Кунта пурте илемлĕччĕ:
Çут Немăн шывĕ хĕрринче
Вăрман кашлатчĕ, ашкăратчĕ,
Тӳпе сенкерччĕ, кăн-кăвакчĕ,
Авăс шăрши кăшт йӳçĕччĕ;
Хыр сухăрĕ кăмăлланччĕ;
Пурте чипер, чипер те ырă.
Уйхир тулли шавлатчĕ тырă,
Çĕрле шевле хитре-хитре
Йăр-яр вылятчĕ пĕлĕтре,
Садсем ем-ешĕл, сывлăш уçă,
Юхатчĕ янраса çăлкуçĕ.

II

Юратнă Немăн, сан çинчен
Пĕрре-и хам сăввăмсенче
Юрланă эпĕ; санăн урлă
Ишсе вăйланнă манăн хулăм.
Саваттăм эпĕ каçхине
Шыв хĕрринчи вучахсене;
Маттур хĕрсем юрланă юрă
Янратчĕ аслă улăх тăрăх,
Пирвай çава вашлатнине
Ырлаттăм, тутлă курăкне
Хураттăм эпĕ пуç айне.
Пăхаттăм кĕмĕл сăплă уйăх,
Шур акăш евĕр шурă уйăх
Шыву çинче ярăннине,
Кăвакалсем ун сăн-питне
Ватса чăлпар салатнине.

Юратнă халăхăн ыр ячĕ,
Тăван чĕлхен тăван хăвачĕ
Илемлĕ аслă улăхра
Кĕрлетчĕ те, тавралăхра
Çилпе кашлатчĕ хирĕм-уйăм,
Шывсем çинче ишетчĕ уйăх.

III

Тăван çĕршывăмăр! Сана,
Хирне, ем-ешĕл вăрманна
Тĕнче тĕлĕнмелле тăвасшăн
Ача пекех пăхса ачашшăн
Ӳстертĕмĕр; садусенче,
Эпир çемçетнĕ çĕр çинче,
Хăпарчĕ çурăлса чеченнĕн
Телей çеçки, телей чечекĕ.
Анчах çĕлен, усал тăшман,
Сан илемне çĕрпе пĕр тан
Тăвасшăн сан çине çĕкленчĕ,
Çунтарчĕ, кĕл туса вĕçтерчĕ,
Юнпа пĕвенчĕ Немăн шывĕ,
Анчах та эсĕ—паттăр, сывă,
Хăватлă эсĕ, Белоруç,
Тăван аннемĕр—Белоруç.

IV

Хăçан хăватлă ăмăрткайăк
Çунат усса мĕскĕн пек кайĕ,
Хăçан пуç тайĕ çăхана,
Виле çăмсаллă тăшмана?
Епле тăван çĕршыв этемĕ
Хаяр вăрçа хаяр çĕкленмĕ?
Вăл таптĕ чĕрĕ юн ĕçен
Çăхан пек ирсĕр нимĕçе.
Пиртен пĕри те пулмĕ таркăн,

Ăçта вăрман, ăçта уçланкă,
Ăçта çырма, ăçта шыв-шур.
Ăçта тăшман сукмакĕ пур,
Пур вырăнта та нимĕç тупĕ
Ик аршăн çĕр тата пĕр тупăк.
Киревсĕр ирсĕр тăшманран
Тасалĕ çывăх вăхăтра,
Сывалĕ пирĕн Белоруç,
Тăван аннемĕр — Белоруç.

(Белорус чĕлхинчен куçарнă).

## КУКĂЛЬ

Виç сехет-и е тăваттă
Иртрĕ ĕнтĕ—
Кукăль çук,
Кĕт те лар!

Мĕскер тăватăн?
Ирĕлмест иккен шăн çу.

Кăмака çунать,
Кăварĕ
Юн пек хĕрлĕ ялкăшать.
Кукăль çук.
Тăшман çăварĕ
Уçăлать те хупăнать.
Тĕпелтен пĕрре каймасăр
Тĕркĕшсе тăрать инке.
Çав-çавах фашист апатсăр:
Кукăль çук,
Пиçмен иккен!

Сăхăм пек ларать пĕр нимĕç,
Мăнтăр обер-лейтенант,
Шăмарса калать:
— Чупкала эс, пултăр çимĕç!
Кукăль пултăр,—тет,—
Тăрант!

— Пиçрĕ ĕнтĕ, акă пулчĕ,
Çу сĕрем-ха,—тет инке.
Обер-лейтенант йăл кулчĕ.

Вас ис дас?
Иртет инкек.

«Сарă кукăль пырна ларĕ,—
Сып эрех!
Тинех тăран!».
Сурчăкне çăтма пуçларĕ
Мăнтăр обер-лейтенант.

Шăлтăр-шăлтăр турĕ алăк.
Инке уçрĕ.
Алăкран
Килчĕ-кĕчĕ автоматлă
Упăшки ун—партизан.

Виç сехет-и е тăваттă
Кĕтнĕ ĕнтĕ.
Халь тăран!
Хурçă кукăль—
Пĕр граната
Хыпрĕ обер-лейтенант.

1941

## ПЫЛ ТУТИ

Ирхине куçна уçан та,
Таврана пăхса илен:
Хĕвелпе вылять уçланкă,
Чĕрене çĕклет илем.

Ир те, каç та сывлăш лайăх,
Ир те, каç та пыл шăрши;
Савăнса юрлать саркайăк,
Шарласа юхать çăлшыв.

Çакăнта колхоз утарĕ,
Икçĕр пуç тулли вĕлле,
Икçĕр пуç пылхурчĕн çарĕ
Яракун кĕрлемелле.

Командирĕ шур сухаллă
Ватă çын—Палюк пичче,
Çитмĕлте пулсан та—паллă
Ячĕ халăх хушшинче.

Курăнмасть вăл пĕртте ваттăн,
Аллине тытмасть патак;
Хурчĕсем ун пысăк рота—
Темиçе пин-пин салтак.

Çулленех, чунран, хастарлăн
Тăрăшнă Палюк пичче,
Пыл пуха-пуха тултарнă
Çулçăсем сараличчен.

Пыл тутаннă çыннăн ырă,
Чăн сăмах чĕлхи çинче;
Чăн сăмах та ырă юрă
Сарăлнă Палюк çинчен.

Тусĕсемшĕн пылĕ унăн
Тутлă пулнă, чăн шерпет.
Çиекен ăна тав тунă
Юррипе, сăмахĕпе.

Ĕмĕрте пĕрре утарçăн
Пылĕ пулнă пит хаяр..

. . . . . . . . . . . . . .

Эп, туссем, сире пăртакçă
Пĕлтерĕсшĕн пĕр хыпар.

Ирхине, хĕвел тухсассăн,
Тĕлĕннĕ Палюк пичче:

Кĕрĕс-мерĕс хытă саслăн
Ӳхĕрсе тăнă тĕнче.

Юрламан хитре саркайăк,
Шыв юхни те илтĕнмен.
Пыл пухма хуртсем нумайăн
Çеçкесем çине вĕçмен.

Çĕр чĕтреннĕ.
Хуглăн-хутлăн
Каш-кашланă сĕм вăрман.
Ушкăн-ушкăн нимĕç утнă,
Килнĕ нимĕç, çĕр çăтман!

Шурă шупăрне пĕркеннĕ
Ватă сын—Палюк пичче.
Тарăхнă вăл, пит çиленнĕ.
Мĕн тăвайăн пĕр пĕччен?..

Ĕмĕрте вăл хăналанă
Хăй юратнă çынсене,
Йăл кула-кула пуçланă
Уçнă пылăн чĕресне.

Вашават этемшĕн хатĕр
Тулли алтăр пыл-сăра,—
Савăнтăр вăл, хĕпĕртетĕр
Пысăк пурлăха кура!

Çĕмĕрсе килет мĕн нимĕç,
Уй-хире таптать иккен.
Мĕн тума килет вăл?
Мĕн ĕç?
Акă пусмăр та инкек!

Çичĕ ют, хапха карланкă,
Армути пек йӳç пыла
Çитĕр-ха эппин.

Уçланкă
Хурт сăннилле пулмалла!

Çĕмĕрет Палюк, ўкеççĕ
Сирпĕнсе сар вĕллесем;
Фашистсем çине кĕреççĕ
Пуля пек пыл хурчĕсем.

1941.

## ВАТĂ КАРЧĂК

Шурăмпуçĕ кăн-кăвакăн
Хăпарсассăн, ир çинче
Ватă карчăк тухрĕ акă
Пўртĕнчен мар, мунчинчен.

Сунтарса кĕллетнĕ ялăн
Çиййĕпе çилсем вĕрсен,
Кăмрăксем çинче асамлăн
Ялкăшаççĕ вут-хĕмсем.

Танк алтса хăварнă çулăн
Варринче выртать ача,
Пуçĕ çук ун, икĕ хулĕ
Тата пĕр ури анчах...

Утрĕ ярăнса ват карчăк,
Шăлса илчĕ куççульне,
Çўлĕ сăрт çине хăпарчĕ,
Ларчĕ пысăк чул çине.

Хĕрелсе тухан хĕвелĕн
Йăмăх хĕрлĕ çуттинче
Курчĕ вăл: епле инкеклĕ
Тăрса юлнă мĕн тĕнче.

Кӑкӑртан та ҫӳлӗ ӳснӗ
Ҫап-ҫара тырра кунтан
Таптаса усаллӑн иртнӗ
Ҫӗр ҫӑтман хура тӑшман.

Терт те тӳснӗ, хур та курнӑ,
Хӗсӗннӗ хӑш чух чӗре,
Вар-вар урлӑ, сӑрт-сӑрт урлӑ
Утнӑ ӗмӗр-ӗмӗрех.

Ҫук, анчах курманччӗ карчӑк
Аслӑ хир ҫуннисене,
Тӗл пулманччӗ ҫулӑн карчӗ
Юнпала тулнисене.

Вӑл илтменччӗ чӗр этемӗн
Куҫ-пуҫне чавнисене,
Ирсӗр вӑрӑ урнӑҫемӗн
Ҫынсене ҫунтарнине.

Хӑйӗн куҫӗпе ват карчӑк
Курчӗ, ҫавӑнпа ирех
Вӑйӗ пур таран уттарчӗ
Ывӑлӗ тӑран ҫӗре.

Ывӑлӗпе савнӑ кинӗ
Унӑн аслӑ вӑрманта,
Ҫавӑнта вӗсен халь килӗ,
Кӳршӗ-аршӗ те унта.

Нимӗҫ, нимӗҫ, сӑрӑ кашкӑр,
Лекмӗ ним те ҫӑварна!
Ывӑлне хӑна тумашкӑн
Карчӑк тухнӑ вӑрмана.

Сылтӑм аллинче—хуранӗ,
Пӗр автан хуранӗнче.

Карчăкăн тăван вăрманĕ
Каш-кашларĕ умĕнче.

Акă вĕтлĕх, акă шурлăх,
Акă тĕтĕм пек тĕтре.
Чăтлăх витĕр, тĕм-тĕм урлă
Ватă çын утать хитре.

Катăк сарă шăлĕ витĕр
Йăхăрса шăхăрнине
Ывăлĕпе кинĕ илтчĕр,—
Алă паччăр амăшне!

Вăрманта мĕн сывлăш уçă,
Сасă ухă пек каять.
Чăштăртатрĕ акă çулçă...
Ывăлĕ сиксе тухать.

Пĕр енче, иккен, граната,
Тепринче, иккен, пăшал.
Ывăль çамрăк, амĕш ватă,—
Аллисем пĕр пек ăшах.

* * *

Икĕ кун-и, виçĕ кун-и
Пурăннă хавасланса;
Ывăлĕпе савнă кинĕ
Ăна пăхнă савăнса.

Ватă карчăк халĕ акă
Таврăнать сĕм вăрмантан.
Çулĕ—тăкăс, кукăр-макăр,
Аллинче çаплах хуран.

Шăлтăр-шăлтăр, кăлтăр-кăлтăр
Вăркăнать мотоциклет.

Кам хурахĕ урăх пултăр?
Чăн эсрел—тăшман килет!

Çитрĕ,—сикрĕ анчĕ нимĕç,
Карчăкран ыйтать:
— Ăçтан?
— Карчăксем ăçта халь çÿрĕç...
Паллă ĕнтĕ, вăрмантан.

— Вăрманта эс мĕн-мĕн турăн?
Ан кĕттер, калаç кĕскен!
— Пăрăва шырарăм. Урăх
Карчăкăн ĕçĕ мĕскер?..

— Эсĕ ман умра хăран-и?
Аллунта мĕншĕн хуран?—
Ыйтрĕ нимĕç.
— Э... хуран-и?—
Терĕ карчăк,—
Ме, ăнлан!

Хуранпа çапса ват карчăк
Çурчĕ нимĕç çамкине,
Çаврăнса калла уттарчĕ
Сĕм хура вăрман ăшне.

1941.

## ИКĔ ТУС

Каç хĕвелĕ лăпкăн анчĕ
Хĕретсе пĕлĕтсене.
Яштак пÿллĕ çамрăк каччă
Пычĕ хăй савни патне.

Икĕ савнă чун тĕл пулнă
Вырăнта, ял хыçĕнче,

Чӑтлӑх витӗр шӑппӑн шунӑ
Ҫил сасси ҫеҫ илтӗнчӗ.

Ҫӑлтӑрсем йӑл-ял ҫунаҫҫӗ
Тӗпсӗр тарӑн тӳпере,
Хӗрӗнсе пӗр пек тапаҫҫӗ
Пӗр пек савнӑ ик чӗре.

Ирхине ӑсанӗ каччӑ
Ҫакӑ ешӗл урампа,
Хӗрӗ юлӗ, анчах таччӑн
Ҫӳрӗ юрату унпа.

Шурӑмпуҫ йӑр-яр шуралчӗ,
Аслӑ уй кӑвакарать.
Уйӑрлас чухне яш каччӑ
Савнине ҫапла калать:

„Хам яла чунран ырлатӑп,
Юрататӑп колхоза,
Сеп-сенкер хире пӑхатӑп
Ӑшӑ кӑмӑлран савса.

Ик ута кӳлсе халь манӑн
Тухмаллаччӗ улӑха.
Ҫук, анчах вӑрҫа каймашкӑн
Чӗнчӗ хамӑн халӑхӑм.

Кӗркуннен сап-сарӑ тумӗ
Ҫаралсан, колхозлӑ уй
Пурлӑхне пухсан, хӗл умӗн
Пулмаллаччӗ пирӗн туй.

Туй тума памарӗ Гитлер,—
Вилӗм ҫитӗр ун пуҫне!—
Хӗрхенмесӗр, шеллемесӗр
Ирӗпӗр тӑшмансене.

Эп паян тухса каятăп
Хĕвелпе пĕрле ирех,
Тантăш-тусселпе васкатăп
Аслă вăрçари хире.

Хăвăншăн çеç мар, чиперĕм,
Тусăм, маншăн та ĕçле!
Йĕрĕнчĕк фашист тискерĕ
Пĕтмелле те вилмелле.

Ун чухне тин эпĕ килĕп
Аслă вăрçă хирĕнчен,
Чаплăн тăрăп тăван килĕм,
Тăван ялăм умĕнче.

Ун чухне вăрман хумханĕ,
Шавлĕ вĕççĕр-хĕрсĕр уй,
Пĕтĕм ялĕпе пуçланĕ
Пирĕн чаплă пысăк туй.

Тусăм, шурăмпуç кăваккăн
Сарăлса килет. Сыв юл!"
Уйрăлаççĕ иккĕш акă,
Икĕ тусăн—икĕ çул.

Вăрçалла каять пĕр çулĕ,
Хирелле тухать тепри.
Вăхăт çитĕ те тĕлпулĕç
Иккĕш те пĕрне-пĕри.

1941

# ГАЛСТУК

Ялан, ирхи ҫанталăк
Ҫап-ҫуттăн килнĕ май,
Кăвар пек хĕрлĕ галстук
Ҫыхатчĕ Николай.

Тумтирĕ яп-якаччĕ,
Кулличчĕ—питĕнче;
Ҫăп-ҫăмăллăн утатчĕ
Шап-шурă юр ҫинче.

Ҫул май юрлатчĕ юрă,
Саватчĕ ыр куна,
Телейлĕ пулнă,—урăх
Мĕн кирлĕ ачана...

Хăй амăшпе пуплетчĕ
Яланхи пек ачаш:
Ӳссе ҫитсессĕн, лётчик
Пуласшăнччĕ ача.

* * *

Ача вăранчĕ. Унăн
Минтерĕ ҫук. Юлман.
Ăна илсе мĕн хунă
Пуҫтах усал тăшман.

Пуҫ вĕҫĕнче шур куҫлăн
Пăхать пĕр офицер.
Пӳртре урай мĕн юнлă.
Кам вилнĕ? Ку мĕскер?!

Ун амăшĕ, мăнтарăн,
Выртать урайĕнче.
Кăкăр суранĕ тарăн,
Суранĕ—ик енче.

Ҫалать куҫҫуль тăкмасăр;
Йĕрмесĕр пионер:
— Ҫук, галстука ҫыхмасăр,
Ан ҫыпҫăн эс, тискер!

Кăвар пек хĕрлĕ галстук
Пӳртре, стена ҫинче,
Юнланнă хĕҫ пек галстук
Тăшман куҫ умĕнче.

— Ҫыхсан, мана вĕлерĕр!..
Пырать галстук патне.
Пăшал сасси кĕрлерĕ,
Юнланчĕ пĕрене.

Ача алла хутлатрĕ
Вĕри чĕри патне,
Вилсен те вăлямарĕ
Юратнă галстукне.

1941

# ТУПМАЛЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| Мускав | 3 |
| Винтовка | 5 |
| Гастелло капитан | 7 |
| Вăрçă хирĕнче | 9 |
| Тăрнасем | 10 |
| Курск хирĕнче | 12 |
| Саркайăк | 13 |
| Çумăр | 14 |
| Çыру | 15 |
| Кăвак çеçке | 17 |
| Шап-шурă хурăн умĕнче | — |
| Карти-карти кикак хуркайăк | 18 |
| Хуркайăксем! | 19 |
| Белорус партизанĕ тупа туни | 20 |
| Белоруç | 22 |
| Кукăль | 25 |
| Пыл тути | 26 |
| Ватă карчăк | 29 |
| Икĕ тус | 32 |
| Галстук | 35 |

Цена 3 р. 50 к.

ЯКОВ УХСАЙ

НА ПОЛЕ БИТВЫ

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1943